Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Лев Кадкин**

**Книга: Воробьиный юг**

**Сказка: Пăшатан хӳре**

Ирпе ыйхаран вăраннă шăшие сивĕ çӳçентернĕ пек пулчĕ. Мĕн тейĕн, кĕрĕкĕ кивелчĕ, ăшă тытаймасть текех. Çапах та ăшăнас килет. Анчах шăшисен кăмаки çук-çке-ха. Шăши вăл хăй ăшшипе пурăнать. Тупса çиет те тырă – акă çитрĕ те ăшă. Пăхкаларĕ хайхискер кĕлетĕнче – ним те тупăнмарĕ. Мĕн тумалла? Ирĕксĕрех çула тухмалла. Шăтăкĕнчен пуçне кăларса пăхрĕ те тĕлĕнсех кайрĕ: пĕтĕм тавра шап-шурă, çутă куçа йăмăхтарать. «Ак мĕн çӳçентернĕ иçккен манна, – шухăшларĕ шăши. – Хĕл ларасшăн-тăр, сивĕ çитрĕ курăнать. Мĕнле пурăнмалла-ши ку кĕркпе?» Сивви те сивĕ, хырăмĕ те хыр тăррине кайнă. Ним тума та çук, тухмах тивет шăтăкран.

Вите умĕнчех ĕне тăрать – улăм кавлет. Улăм кавлет. Улăм тенĕрен, ун айĕнче яланах тутлă тырă пĕрчи тупма пулать! Шăши никам сисиччен çавăнта чăмма шутларĕ. Енчен енне пăхкаларĕ, хăрушлăх çук-ши тесе хăлхине тăратса итлерĕ, – мĕн тăван, асăрханмасан хăвăнтан ирхи апат тăваççĕ. Чиперех пек-ха. Сас-чĕв илтĕнмест. Пире тытас шухăшлисем хальлĕхе выранман пулас-ха. Эппин, шур юр
Çийĕн кил хушши урлă каçма юрать.

Çав вăхăтра пӳртрен кил хуçи арăмĕ сĕт витрипе тухатчĕ. Ĕне сума. Ун хыççăнах –кушак. Паçăртан-пах алăк уçăласса кĕтсе ларнă-мĕн вăл. Юр çинче шăши йĕррине курнă-курманах хыçалтан тапса çикрĕ.

«Ну, пăшатан хӳре, – шутларĕ кушак, – хальхинче сана ярса тытатăпах.

Ӳплинче выртакан Барбос çав самантра чĕтресе вăранса кайрĕ. Хамхамсем мăрмăрсемпе туслă марине пурте пĕлеççĕ. Хальхинче те йытă кушака асăрхарĕ кăна – шăлне хăйрасах ун хыççăн вĕçтерчĕ. Кушакки Барбосран хăранипе чăкăл-чăкăл юпа çине хăпарса кайрĕ.

«Ых, хурах, – тарăхса хăрлатрĕ кушак, – эс çула пӳлмен пулсан çаклататтăмах пăшатан хӳрене». Чăн та, кӳренмелле, анчах ним тума та çук. Ларать халь вăл юпа тăрринче аялалла пăхса. «Эх, усал йытă, – тет пулĕ хăй ăшĕнче, – сана пулах ирхи апат тăваймарăм». Барбос хăй те хĕрлемес чупкăна тытайманнишĕн тарăхать. Пĕрре тăн кĕртесшĕччĕ ярса илсе, анчах мĕнле çитейĕн, ав епле çӳлте ларать вăл, чеескер.

Ним тума пĕлмен енне пĕр канна юпа тавралла сиккелерĕ, çиллессĕн хамлатса илчĕ. Унтан юпа çумне ларчĕ, çӳлелле пăхса илчĕ те çапла тĕв турĕ: «Пур-пĕрех лекетĕн эс манн алла, ниçта та тарса хăтăлаймастăн. Сана унта ларса йăлăхтариччен те çакăнтан хăпмастăп».

Хуçа арăмĕ йытăпа кушакăн ĕмĕрхи вăййине асăрхарĕ те йăл кулса илчĕ, васкасах витенелле утрĕ. Унăн хăйĕн ĕçĕсем. Утнăçемĕн шăши йĕррине те таптаса кайрĕ вăл ав. Витен тытăнкăсăр алăкне яри уçса хыттăн хупнă чух

йыттин ирӗксӗрех тепӗр ҫӗре куҫма тиврӗ. Кушакки ҫав самантпа усӑ курса аяла сикрӗ те тӳрех ҫенӗке чӑмрӗ. Барбос ун хыҫҫӑн вирхӗнчӗ, анчах каллех тытма ӗлкӗреймерӗ.

«Хӑр-р-р», – тесе кӳренчӗклӗн тулхӑрса илчӗ те ӳплинелле уттарчӗ йытӑ.

Акӑ пӳртрен кил хуҫи тухрӗ, хӗл ир ларнинчен тӗлӗнчӗ. Юра шӑлса пуҫтарас тесе аллине шӑпӑр тытнӑ май Барбосран ыйтрӗ: «Ну, пӗлтерсем, хуралҫӑ, ҫӗн юр ҫиййӗн кам пӗрремӗш йӗр хыврӗ?»

Барбос хӳрине вылятрӗ, хуҫа умӗнче хаваслӑн сиккеленӗ май вӗрсе илчӗ: «Хам-хам!» Ку ӗнтӗ йытӑ чӗлхипе: «Эпӗ, хуҫам», – тени пулчӗ.

Йӑлт итлесе ларакан кушака Барбос калани килӗшмерӗ. Ҫавӑнпа ҫенӗк алӑкӗн хушӑкӗнчен вӑл та сасӑ пачӗ: «Мяук, мяук…» Ку ӗнтӗ: «Суять вӑл. Эпӗ пултӑм юр ҫинче пӗрремӗш йӗр хываканӗ», – тенине пӗлтерчӗ.

Шӑши, тырӑ ҫисе тӑранма ӗлкӗрнӗскер, мӗн пулса иртнине хӑй шӑтӑкӗнчен пӑхса ларатчӗ. Вӑл йытӑпа кушак хуҫа умӗнче ӑмӑртмаллах мухтаннине илтрӗ, анчах шарламарӗ. «Шарламанни аванрах-тӑр, – шухӑшларӗ вӑл. – Ҫӗнӗ юра тӗрӗ тӗрленӗ пек йӗрлекенни эпӗ пулнине пӗлсен те хуҫа манна ырламӗ. Вӗсем манна шута хуманни кӳрентерет палах, анчах шӑпи ҫапла куҫа курӑнмасӑр пурӑнмалла тунӑ та – ҫырлахмах тивет ӗнтӗ».

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования. Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.